Вырăнти самоуправлени ыйтăвĕсемпе

# Тухăçлă ĕç мелĕсене пĕрле палăртмалла

«Раççей Федерацийĕнче вырăнти самоуправление йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен» 131-мĕш номерлĕ Федераллă саккун вăя кĕнĕренпе пилĕк çул ытла вăхăт иртрĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх ĕçнехĕлне йĕркелесе пырассинче çак хушăра сахал мар улшăнусем пулса иртрĕç. Ырă еннелле улшăнусем ытларах пулни савăнтарать. Апла пулин те хальлĕхе вырăнсенче татса паман ыйтусем, пĕрпĕринчен вĕренмелли, канашламалли те çук мар-ха. Çĕнĕ япала нихăçан та çăмăллăн пурнăça кĕрейместь. Çавăнпа та майăн 26-мĕшĕнче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашĕн ларăвне irrтерни пуриншĕн те усăллă пулчĕ.

Малтанах ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем район администрацийĕн ларусем ирттермелли пĕчĕк залне пухăнчĕç. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ларăва уçнă май ял тăрăхĕсем бюджет ыйтăвĕсем çине ытларах тимлĕх уйăрма тивĕç пулнине палăртрĕ. Вăл шутран кăçалхи бюджета пурнăçлассипе те, çитес çулхи бюджет проектне хатĕрлессипе те.

Ку ыйтупах район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Р.И. Ананьева та тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З.Ю Дипломатова хăйĕн сăмахĕнче çуллахи каникул кунĕсенче ачасен ĕçпе канăвне йĕркелес ыйтусене хускатрĕ. Культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева вара районти Акатуй уявне тивĕçлипе уявлассипе çыхăннă ыйтусем çинче чарăнчĕ. Çавна валли комисси йĕркеленĕ, уяв программине хатĕрленĕ. Акатуйсене вара вырăнсенче те ирттерес пулать. Кунпа пĕрлех вăл вырăнсенче пĕчĕк тупăшлă çемьесенчи ачасем валли хатĕрсем пухассине йĕркелеме сĕнчĕ.

Çавна та каласа хăвармалла. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашĕн ларăвĕ кабинетра кăна иртмерĕ. Пуçлăхсем пĕр-пĕрин патĕнче вырăнсенче пулса курчĕç, хăй тытăмлăх ĕçĕ-хĕлĕн лайăх енĕсемпе паллашрĕç.

Акă Чуманкасси ялĕнче йĕркеллĕ Культура çурчĕ пулманни тахçанах кун йĕркинче тăнă. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева каласа панă тăрăх, çине тăнипе кивĕ çурта юсаса çĕнетме май тупнă. Халĕ кунта илемлĕ те хăтлă. Хăнасене йышăнма та намăс мар. Çамрăксем те Культура çуртне канма тата савăнма кăмăлпах çӳреççĕ.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем Турай ял тăрăхĕн администрацийĕнче компьютерпа усă курса çĕрпе усă курассин карттине епле йĕркелемеллипе паллашрĕç. Кун пирки район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.В. Петров ăнлантарса пачĕ, епле документсем хатĕрлессипе çыхăннă ыйтусене хускатрĕ.

Ярославка ял тăрăхĕнче те курмалли-паллашмалли çук мар. Чемейре ял çыннисем пулăшнипе, спонсорсем укçа хывнипе çветуй Николай Чудотворец тата Михаил Архангел ячĕпе часавай туса лартнă. Кунпа пĕрлех Чемейре ял тăрăхĕсем хушшинчи пушар хуралне йĕркелес ыйту çивĕч тăрать. Кун пирки район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Н.П. Милютин тата районти патшалăх пушар хурал надзорĕн пуçлăхĕ И.Н. Смирнов тĕплĕ чарăнчĕç. Пушар хăрушлăхĕ вара хальхи вăхăтра кун йĕркинчен каймасть. Çак вăхăта районĕпе 21 пушар пулнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 2,5 хут нумайрах. Сахал мар пурлăх кĕл пулса вĕçет. 21 пушартан 18-шĕ уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче пулни те шухăшлаттармалла. Ытларах чухне пушар тухнин сăлтавĕсем тип курăк хыпса илнипе, пирус туртнă чухне асăрханусăр пулнипе, электричество, газ приборĕсем е мăрьесем юсавсăр пулнипе çыхăннă. Вырăнсенче каçхи хурал тăрассине те йĕркелеме вăхăт. Граждансен пухăвĕсенче пушар хăрушлăхĕ пирки ăнлантару ĕçне анлăн туса пыни кирлĕ. Нумай чухне пушар машинисем валли шыв уçлама пĕвĕсем патне пыма ятарласа хатĕрленĕ çулсем çук. Тепĕр чухне çынсем пушар пирки кĕсье телефонĕсемпе мĕнле шăнкăравласа пĕлтермеллине те пĕлмеççĕ. Çак çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерес пулать.

Юнкă ял тăрăхĕнче пулса курнă май чылайăшне «Росагро» производство кооперативĕн ĕçĕ-хĕлĕ интереслентерчĕ. Ăна Н.В. Ядыков 2007 çулта йĕркеленĕ. Кооператив ытларах çынсенчен сĕт пухассипе ĕçлет. Кооперативра 69 çын шутланать, тулли праваллисем 34 çын. Тавар çаврăнăш калăпăшĕ 2780 пин тенкĕ. Сĕт туяннипе пĕрлех кооператив çынсене макарон изделийĕсемпе, выльăхсем валли хывăхпа та тивĕçтерет. Шупашкарта суту-илӳ вырăнĕ тытаççĕ. Унта 728 пин тенкĕлĕх продукци сутнă.

Николай Витальевича ял çыннисен ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерес тĕллевпе модуллĕ сĕт цехĕ йĕркелеме оборудовани туянасси те кăсăклантарать. Анчах та хальлĕхе çакна валли кредит илессипе татса паман ыйтусем пур-ха. Апла пулин те вăл хăйĕн шухăшне пурнăça кĕртмех тĕв тăвать.

Ялта пурăнакансен интересĕсене тĕпе хурса ял тăрăхĕнче йĕркеленĕ тепĕр кооператив пирки те каласа хăвармалла. Ку вăл «Юнга–-Согласие» кредит кооперативĕ. Унăн директорĕ Т.В. Ермакова каласа панă тăрăх, вĕсем ĕçе кӳлĕнни тăваттăмĕш çул. Çак тапхăрта чылай ял çыннисене вăхăтлăх укçа-тенкĕ парса пулăшнă. Кооператива кĕме çынсем 300 тенкĕ обязательнăй взнос тата 100 тенкĕ член взносĕ тӳлеççĕ. Кооператив ĕç-хĕлĕпе çынсем кăмăллă.

Курмалли, пĕлмелли, вĕренмелли татах сахал мар пулчĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашĕн вырăна тухса ирттернĕ ларăвĕнче. Лару итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май вара вĕсем кун пек тĕл пулусем, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни малашне те кирлĕ пулнине палăртрĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Суд материалĕсем тăрăх

# Çуран утма ӳркенсен...



Юлашки çулсенче уйрăм харпăрлăхри автотранспорт хатĕрĕсен шучĕ ӳссе пыни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Çавна май вĕсене вăрлакансен шучĕ те ӳссе пыни палăрать. Автомашинăсене тĕрлĕ майпа илсе каяççĕ: хăш чухне транспорт хуçисем тимсĕртерех пулнă, тепĕр чухне вăрăсем «ăста» хăтланнă.

Нумай чухне автомашина хуçисем вĕсене вăрласа кайма хăйсемех майсем туса параççĕ темелле. Тепĕр чухне вĕсем автомашинăсен алăкĕсене çăрапа питĕрмесĕрех, çитменнине зажигани уççипе пĕрлех чылай вăхăтлăха пăрахса хăвараççĕ. Нумай чухне çакă пысăк преступлени пекех курăнмасть пулин те, çыннăн автотранспортне ирĕксĕр илсе кайни анлă сарăлнă преступленисен шутне кĕрет.

Нумаях пулмасть Муркаш район сучĕ РФ Уголовнăй Кодексĕн 166-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе çыхăннă уголовнăй 2 ĕçе пăхса тухрĕ. Акă С. гражданин хăнара пулнă, эрехне сахалах сыпман. Киле каяс тесе урама тухнă. Анчах та çуран утас килмен. Çитменнине урамра хăйсен хуçисене кĕтсе темиçе автомашина тăнă. «Телее» пĕр автомашина алăкĕсем уçах пулнă, зажигани уççи те вырăнтах. С. кабинăна кĕрсе вырнаçнă та автомашинăна вырăнтан хускатнă, киле кайма тухнă. Анчах та ӳсĕр çынна автомашина итлеми пулнă, çапла вара вăл кювета чăмнă. Киле вара çуранах çитме тивнĕ. Халĕ ĕнтĕ С. гражданинăн пĕчĕкех мар сумма штраф тӳлемелле пулать.

Татах тепĕр тĕслĕх. Çамрăк çын ĕç кунĕ вĕçленнĕ хыççăн самаях эрех сыпнă, киле кайма пуçтарăннă. Анчах та çуран утасах килмен. Çавăнпа та чикĕллĕ яваплăхлă обществăн автотрактор паркне кĕрсе трактор хускатса тухнă, килелле çул тытнă. Çул çинче вăл хĕр-юлташне тĕл пулнă, ăна тракторпа илсе çитерме сĕннĕ. Анчах та лешĕ ӳсĕр çынпа кабинăна ларма килĕшмен. Кайран вара вăл тракторпа каялла таврăннă. Асăннă çамрăк çынна унччен те ют çын пурлăхне вăрланăшăн айăпланине шута илсе 1 çулталăк та 3 уйăх хушши ирĕкрен хăтарма йышăннă.

Халĕ вара Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 166-мĕш статйи пирки тĕплĕнрех. Ку вăл çыннăн автомобилĕпе вăрлас шухăшсăр усă курни пулать. Тепĕр майлă каласан, хуçин ирĕкĕсĕр автомашинăпа ăста та пулин кайни асăннă преступлени шутне кĕрет. Автомашинăна тапратса вырăнтан куçарнă пулсан, çын преступлени тунă тесе хаклама пулать.

Автомашинăна вăрлама хăтланни шутне алăк çăрисене тата сыхлав сигнализацийĕн системине ватма, двигателе хускатма хăтланни, автомашинăпа кайма тытăнни кĕреççĕ. Асăннă преступленисем шутне мопедсемпе, велосипедсемпе, кĕсменлĕ кимĕсемпе çыхăннă ĕçсем кĕмеççĕ. Апла пулин те вĕсемпе правăна пăсса усă курнăшăн та çын пурлăхне вăрлани тесе уголовнăй майпа айăплама пăхнă.

Автомашинăна хăваласа кайни – пĕчĕк преступлени мар. Çавна май уншăн айăплав та çирĕп пулать. РФ Уголовнăй Кодексĕн 166-мĕш статйипе пăхнă тăрăх, транспорт хатĕрне вăрлас шухăш пулман пулин те, унпа правăна пăсса усă курнăшăн 5 çул таран ирĕкрен хăтарма пултараççĕ.

**С. ТРИХАЛКИН,**
**Муркаш район сучĕн судйи.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Çут çанталăкпа пĕрле

***(«Пурнăç авăрĕ» ярăмран)***

Кĕрен хĕвеллĕ хĕл сивви
Çупăрларĕ çурăмран.
Тăлăп хыврĕ Хĕл Мучи
Ĕмĕрхи юман çурсан.

Ай-яй-ой, хыт чуп турĕ тутаран,
Ай-яй-ой, тăм чĕпĕтрĕ хăлхаран,
Ай-яй-ой, çăтăр! çыртрĕ сăмсаран,
Ай-яй-ой, хĕм кăларчĕ куçăмран.

Çăвĕ çитĕ, кĕрĕ иртĕ,
Ак каллех умра хĕлле.
Çавра çил кăна халь кирлĕ,
Лар, савни, çума пĕрле.

Ай-яй-ой, ытала мана, савни,
Ай-яй-ой, тăтăр катара сивви,
Ай-яй-ой, пĕçертет савни тути,
Ай-яй-ой, таврара тăри кĕвви.

Çут çанталăкпа тавлашмăп –
Унăн пурте хăй валли,
Шыв-шурла урса шавламăп –
Чунăмра хĕвел шевли.

Ай-яй-ой, телей мар-им пурăнни,
Ай-яй-ой, хыçа юл, хуйхи-суйхи,
Ай-яй-ой, çиттĕр çын ĕмĕтленни,
Ай-яй-ой, уçăл эс, кун-çул хапхи.

**Василий МАКСИМОВ.**

**ПРОГРАММА**
**Чебоксарского международного кинофестиваля 1-6 июня 2009 года**

**4 июня, четверг**

**Кинотеатр «Мир Луксор»**
*(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.23)*
**09.00.** Детская программа. Х/ф «Костяника. Время лета» (для детей старше 12 лет в сопровождении родителей). Представляет режиссер **Дмитрий Федоров**
**21.30.** Международная панорама фильмов «Другое кино». Х/ф «Я всегда хотел быть гангстером» (Франция)
**ДК им. П.П. Хузангая** *(г.Чебоксары, ул. З.Яковлевой, д.54а)*
**9.30.** Детская программа. М/ф «Ну, погоди»
**10.10.** Детская программа. Х/ф «Морозко»
**Дворец культуры «Салют»** *(г. Чебоксары, ул. Энтузиастов, д.36/9)*
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Волшебный кошелек»
**14.00.** Ретроспективный показ. Х/ф «Я - император»
**Кинозал Государственного архива электронной и кинодокументации Чувашской Республики** *(г.Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 12а, II этаж*)
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Неуловимые мстители»
**14.00.** История страны - история народа. Д/ф «Сквозь годы мчась»
**Дворец культуры тракторостроителей**
*(г. Чебоксары, Эгерский бульвар, д.36)*
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Лохматый папа»
**Дворец культуры «Акация»**
*(г.Чебоксары, п.Лапсары, ул.Совхозная. д.3)*
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Подвиг разведчика»
**18.00.** Панорама российских фильмов. Х/ф «Иваново детство»
**Кинотеатр «Атĕл»**
*(г.Новочебоксарск, ул. Винокурова, д.42, большой зал)*
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Ночь в музее-2»
**18.00**. Из цикла «Возвращенные шедевры». Х/ф «Война и мир» (4 серия)
**Национальная библиотека Чувашской Республики**
*(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.15)*
**11.00.**Конкурс. Фильмы студии «Сабантуй», г. Казань
**12.00.** Пресс-конференция участников и гостей кинофестиваля
**13.00.** Пресс-конференция с Эльдаром Рязановым
**15.00.** Конкурс. Фильмы студии «Новый курс», г. Пермь
**18.30.** Специальное событие. Д/ф «Мой друг Сербия» (Сербия). Представляет режиссер **Соня Благоевич**
**Кинотеатр «Сеспель»** *(г. Чебоксары, Московский пр., д.33/9)*
**11.00.** Конкурс. Х/ф «Пленный» (Россия-Болгария). Представляет актер **Петр Логачев**
**15.00**. Конкурс. Х/ф «Russia 88» («Россия 88») (фильм разрешен для показа зрителям, достигшим 18 лет)
**17.20.** Конкурс. Х/ф «Тайна Чингис Хаана» (Россия-Монголия -США). Представляют режиссер **Андрей Борисов** и продюсер **Владимир Иванов**
**19.30.** Панорама российских фильмов. Х/ф «Живи и помни». Представляет актриса **Дарья Мороз**
**Чувашский государственный театр оперы и балета**
*(г.Чебоксары, Московский проспект, д.1)*
**19.00**. Творческий вечер народного артиста Российской Федерации **Дмитрия Харатьяна**

**5 июня, пятница**

**Кинотеатр «Мир Луксор»** *(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.23)*
**09.00** Детская программа. Х/ф «Дюймовочка». Представляет композитор, заслуженный деятель искусств Российской Федерации **Григорий Гладков**
**21.30.** Международная панорама фильмов «Другое кино».
Программа короткометражных фильмов «Сестры и Медузы» (Голландия)
**ДК им. П.П. Хузангая** (г.Чебоксары, ул. З.Яковлевой, д.54а)
**9.30.** Детская программа. М/ф «Анастасия»
**10.10**. Детская программа. Х/ф «Барышня-крестьянка»
**Дворец культуры «Салют»** *(г. Чебоксары, ул. Энтузиастов, д.36/9)*
**10.00**. Детская программа. Х/ф «Огненный стрелок»
**14.00.** Ретроспективный показ. Х/ф «Падение Голиафа»
**Кинозал Государственного архива электронной и кинодокументации Чувашской Республики** *(г.Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 12а, II этаж*)
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Зеленые цепочки»
**14.00.** Д/ф «Разгром немецких войск под Москвой», «Блокада»
**Дворец культуры тракторостроителей**
*(г. Чебоксары, Эгерский бульвар, д.36)*
**10.00.** Детская программа. М/ф «Приключения Флика»
**15.00.** Х/ф «Агония». Творческая встреча с народным артистом России **Алексеем Петренко.**
**Дворец культуры «Акация»**
*(г.Чебоксары, п. Лапсары, ул.Совхозная. д.3)*
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Сказка А.С. Пушкина»
**Кинотеатр «Атĕл»**
*(г.Новочебоксарск, ул. Винокурова, д.42, большой зал)*
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Костяника. Время лета» (для детей старше 12 лет в сопровождении родителей). Представляет режиссер **Дмитрий Федоров**
**Национальная библиотека Чувашской Республики**
*(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.15)*
**11.00.** Мастер-класс режиссера неигрового кино **Вадима Цаликова**. Д/ф «Дети Беслана»
**12.00.** Пресс-конференция участников и гостей кинофестиваля
**13.00.** Пресс-конференция участников и гостей кинофестиваля
**15.00.** Конкурс. Фильмы Санкт-Петербургской студии документальных фильмов
**18.30.** Мастер-класс писателя, телеведущего **Дмитрия Быкова**. Д/ф «Девственность»
**Кинотеатр «Сеспель»** *(г. Чебоксары, Московский пр., д.33/9)*
**15.00.** Конкурс. Х/ф «Георг» (Россия-Эстония-Финляндия). Представляют режиссер **Пеэтер Симм**, сценарист **Александр Бородянский**, актриса **Анастасия Макеева**
**17.20.** Конкурс. Х/ф «Океан», (Россия-Куба)
**19.30**. Специальное событие. Х/ф «Тайны дворцовых переворотов. Виват, Анна Иоановна». Представляют **Светлана Дружинина, Анатолий Мукасей, Дмитрий Харатьян, Алексей Петренко, Игорь Дадиани**
**Чувашский государственный институт культуры и искусств**
*(г.Чебоксары, ул. Энтузиастов, д.26)*
**11.00.** Х/ф «Раба любви». Мастер-класс режиссера, актера, сценариста, продюсера народного артиста Российской Федерации **Родиона Нахапетова**
**Чувашский национальный музей**
*(г. Чебоксары, Красная площадь, д.5)*
**11.00.** Круглый стол «Право наций на кинематограф: фильмы и образы современного мира». Ведет член Общественной палаты Российской Федерации Алла Гербер.

**6 июня, суббота**

**Дворец культуры «Салют»** *(г. Чебоксары, ул. Энтузиастов, д.36/9)*
**10.00.** Детская программа. М/ф «Гора самоцветов». Представляет композитор, заслуженный деятель искусств Российской Федерации **Григорий Гладков**
**Кинозал Государственного архива электронной и кинодокументации Чувашской Республики** *(г.Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 12а, II этаж*)
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Так начиналась легенда»
**14.00**. Д/ф «Лев Толстой», «Россия мне снится редко», «Юрий Никулин»
**Кинотеатр «Сеспель»** *(г. Чебоксары, Московский пр., д.33/9)*
**15.00.** Панорама российских фильмов. Х/ф «Однажды в провинции». Представляет режиссер **Екатерина Шагалова**
**18.00.** Панорама российских фильмов. Х/ф «Исчезнувшая империя». Представляет режиссер, народный артист Российской Федерации **Карен Шахназаров**
**Национальная библиотека Чувашской Республики**
(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.15)
**12.00.** Пресс-конференция участников и гостей кинофестиваля
**13.00.** Пресс-конференция участников и гостей кинофестиваля
**14.00.** Пресс-конференция участников и гостей кинофестиваля
**18.30.** Кинематографические земляки. Народный артист СССР Максим Михайлов. Х/ф «Черевички». Представляет киновед **Вячеслав Шмыров**
**Чувашский государственный академический драматический театр им. К.В. Иванова** (г. Чебоксары, Красная площадь, д.7)
16.00. Торжественная церемония награждения победителей Чебоксарского международного кинофестиваля
18.00. Концертная программа с участием лучших творческих коллективов и исполнителей республики